**Гаврилова Римма Альбертовна, Николаева Надежда Михайловна**,
Шупашкар хулинчи 40-мӗш вӑтам шкул,
чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекенсем.

# УХСАЙ ЯКОВӖН ВӐТӐРМӖШ ҪУЛСЕНЧИ ПУБЛИЦИСТИКИ

Ухсай Яккӑвӗн публицистикӑри ӗҫӗ-хӗлне виҫӗ пысӑк тапхӑра пайланӑ. Пуҫламӑш тапхӑрӗ 30-мӗш ҫулсене тивет. Ӑҫта, хӑҫан, мӗн пичетленӗ поэт ку вӑхӑтра? Мӗнле тематикӑпа, мӗнле жанрпа ҫырнӑ? Ҫакна пӗтӗмпех тӗплӗн тӗпчес тӗллев лартрӑмӑр. Ку вӑхӑтра Ухсай Яккӑвӗ пӗтӗмпе 50 яхӑн публицистика хайлавӗ пичетленӗ. Эпир вӗсемпе пуринпе тенӗ пекех паллашрӑмӑр. Ухсай Яккӑвӗ ҫак тапхӑрта мӗнле хаҫат-журналпа ҫыхӑну тытнӑ-ха? Вӑл хӑйӗн статйисемпе заметкисене, фельетонӗсемпе очеркӗсене Мускаврра тухса тӑракан «Чӑваш хресченӗ», «Коммунар», Куйбышев облаҫӗнчи «Колхозник» ятлӑ чӑваш хаҫачӗсенче, Литература хаҫатӗнче, «Канаш», «Чӑваш коммуни», «Красная Чувашия» хаҫатсенче, «Сунтал», «Илемлӗ литература», «Хатӗр пул», «Трактор», «Колхозник» ятлӑ журналсемпе альманахсенче пичетленӗ.

Ухсай Яккӑвӗ тӗрлӗрен темӑпа ҫырнӑ. Публицистӑн 30-мӗш ҫулсенчи тӗп темисем – чӑваш халӑхӗн ӗҫри паттӑрлӑхӗ, коллективлӑ хуҫалӑхсем йӗркелени, малта пыракансен ӗҫӗ-хӗлӗ, вӗсен ӗҫри паттӑрлӑхӗ, тӑван халӑхӑн культури. Унӑн «Траль» колхоз рапорт парать» (1930), «Колхоз парни» (1930), «Ворошилов субботникӗ» (1931), «Ӗҫ паттӑрӗ А.Т. Калинина» (1932), «Иванӑн ӗмӗчӗ тавранни» (1934), «Пурҫӑн хучӗсем» (1938), «Ҫунатлӑ ҫын» (1938) ятлӑ корреспонденцийӗсемпе очеркӗсенче пӗтӗм совет ҫыннипе пӗрле чӑваш халӑхӗ ҫӗнӗ пурнӑҫ тума пуҫлани, ялсенче коллективлӑ хуҫалӑхсем йӗркелени, пӗрремӗш пилӗкҫуллӑх планӗсене тултарни ҫинчен каласа панӑ.

Ухсай Яккӑвӗн 30-мӗш ҫулсенчи публицистикӑлла произведенисен жанрӗ те тӗрлӗрен пулнӑ. 1931-мӗш ҫулта вӑл «Чӑваш хресченӗ» хаҫатра «Сакӑр профессипе сакӑр чӗлхе пӗлекен эмигранта ӗҫе илмен» критикӑлла заметка пичетлет. Унта Путянов ятлӑ ҫынна ӗҫе илменни ҫинчен ҫырса кӑтартать.

30-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнчех литература ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑннӑ статьясемпе рецензисем ҫырать. «Усӑсӑр кӗнеке» статьяра Ф. Петровпа М. Цветков Пушкӑрт издательствинче кӑларнӑ «Тӗне хирӗҫ» ятлӑ кӗнеке ҫинчен ҫырать. Ку кӗнекене Ухсай Яккӑвӗ пӗтӗмпех критиклесе пӗтерет: «Кӗнеке пуҫӗнчен пуҫласа вӗҫне тухиччenex шурӑпа хурана палламасӑр «пыртарса пытармалла сӑмахсемпе авторсем такмакласа тухса каяҫҫӗ. Унти йӑнӑшсем ҫинчен калаҫма та юрамасть, мӗншӗн тесен тӗрӗссисем, сӑн-сӑпатлӑх вырӑнсем кӗнекере ҫук».

«Малтанхи утӑмсем» статьяра Чӑваш патшалӑх филармонийӗ пӗрремӗш концерт панӑ пирки ҫырать. Наци культури ҫӗкленнишӗн савӑнать: «Халӗ 20

çул çитет ĕнтĕ эпир телей илни, юрă юман хăвăлĕнче мар, пĕтĕм аслă çĕр-шыв тăрăх янăрать… Филармони вăйĕ пур, музыка ăсталăхĕпе авăрланнă çынсем те пур». Публицист Çеçпĕл  Мишши каланă вăхăт çитнишĕн хавхаланса çырать.

«Кăмăллă çĕр-шывăн кăмăллă чĕлхиçĕм!...

1932-мĕш çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче «Коммунар» хаçатра «Траль» колхозри тура лаша тăлăпĕ» сăвăлла фельетон кун çути курать. Лаша калаçма та, шухăшлама та пĕлет:

Чĕлхине вăл кăларчĕ,
Чăвашла калаçма тытăнчĕ.

Фельетонра автор тĕрлĕрен эпитетпа, танлаштарупа усă курать, вырăнти бюрократсене критиклет:

Витере те çӳп-çап,
Шăрша-маршă.
Колхосри пӳрократ пек нумай
– Эпир
Çак колхозри чун мар-ши?
Çак ыйту ман ума
Çĕкленет.

20 урлă Ухсай Яккăвĕ очерксем те çырма пуçлать: пулăм (событи) очеркĕсем («Колхоз парни», «Ворошилов субботникĕ»), портрет очеркĕсем («Ĕç паттăрĕ А.Т. Калинина»), çул çӳрев очеркĕсем («Кунта Нарспи пурăннă»). А. Ĕçхĕлпе пĕрле Чăваш Республикинчи паллă çынсем çинчен темиçе очерк çырать: «Леонтий Остряков» (1938), «Анна Михайлова» (1938), «Тимофей Ахазов» (1938).

«Колхоз парни» очеркра «Траль» колхоз октябрь уявĕ умĕн патшалăха чи малтан тырă пани çинчен çырса кăтартать. Çак колхоза хăйĕн тăван ялĕ (Слакпуç) кĕрет. Вăл вăхăтра кашни ял хăй пĕр колхоз пулнă. «Траль» колхоз патшалăха 2500 пăт тырă парать. Эпир уяв умĕнхи ял халăхĕн ĕç паттăрлăхне куратпăр.

«Ворошилов субботникĕ» очеркра хĕрлĕ армеецсем субботникра тăрăшса ĕçленине кăтартса панă. Кашни салтакăн 6 карçинкка чие татмалла пулсан вĕсем 8-10-шар карçинкка тултарнă. Совхоз директорĕ митингра вĕсене ырлать.

«Ĕç паттăрĕ А.Т. Калинина» очерка Атăл тăрахĕнчи выçлăх пулнăранпа вунă çул иртнине халалласа çырнă. «Çав вăхатра  Мускавра выçă çынсене пулăшакан патшалăх комиссийĕ ĕçленĕ. Çав комисси çумĕнче выçăхакан ачасене пулăшас йĕркепе пĕчĕк комиççи пулать, ун пуçлăхĕ Аççă Тавытăвнă Калинина пулнă».

Мĕнле ĕçсем тăвать-ха Ася Давыдовна? Вăл тăлăх ачасене пуçтарса Мускава илсе каять, хăех вĕсене пăхать. Ася Давыдовна ватă хастар коммунистка. 1921-мĕш çулта темиçе пин ачана выçлахран хăтарса вĕсене

социализм строительствишĕн активлă кĕрешекен паттăрсем турĕ. «Чăваш ачисемшен çапла хастарлăхпа ĕçленĕшен вăл ахальтен мар «чăваш ачисен амăшĕ» тенĕ чаплă ят илтрĕ».

1931-мĕш çулта Ухсай Яккăвĕн «Сунтал» журналта «Хыпар» ятлă произведени пичетленет. Ун жанрне автор новелла тесе палăртать. Çак хайлавра класс тăшманĕсем колхоз председательне тискеррĕн вĕлерни çинчен çырса кăтартнă. Ку произведение проблемăллă очерксен шутне кĕртмелле.

### Публицистăн вăтăрмĕш çулсенчи тĕп темисем

Ухсай Яккăвĕ тĕрлĕ темăпе çырнине асăнтăмăр ĕнтĕ, вĕсене содержанийĕ енчен илсен икĕ пысăк ушкăна уйăрма пулать: литература, культура ыйтăвĕсемпе тата тĕрлĕ ыйтусемпе çырнисем. Литература ыйтăвĕпе çырнă статьясем 25 яхăн. Поэтăмăр тăван халăх культурине аталантарассишĕн нумай тăрăшать. Вăл çĕнĕ кĕнекесем тухнă хыççăн нумай статья, рецензи çырать. Публицист литература критикине халалланă статьясем те нумай пичетлет, чăваш литературине çӳлерех шая çĕклессишĕн нумай тăрăшать.

Ухсай Яккăвĕн литература тата культура ыйтăвĕпе çырнă статьясем 30-мĕш çул пуçламăшĕнчех тухма пуçланă. «Утăмсем çинчен» (1930 ç.) статьяна илер-ха. Кунта вăл Уйăп Мишши, Нестер Янкас, Илле Тукташ хайлавĕсене пухса кăларнă «Сăвăсем» ятлă кĕнеке çине рецензи çырать. «Кĕнекене куç хĕссе вăрçма май çук. Чăваш литератури çĕнĕ ытамлăхĕпе ӳссе пынă чух кун пек ăшчик енчен (форма) тăрăшса ĕçлекен ăстаçăсене пахаллă саламлас пулать»,* – тесе çырать Ухсай сăвăçсем пирки. Малашне вĕсен мĕнле ĕçлемелли çул-йĕрне кăтартать: «Малашне Уйăпăн хурăнсене, çырмасене чăвашлатсан та юрамалла пек. Янкасран – малашне пролетари сăвăçĕ пуласси не шанма май пур. Тукташ пĕр япала çинчен кĕскен каламасăр виç çухрăм вырăнне çитмĕл çухрăма хăвалакалать – йăлăхтарать çав».*

Çамрăк публицист Ухсай Яккăвĕ вирлĕн критиклет. «Данилов-Чалтун çырнă калавсем пирки (1930) статьяра «Шахтĕр» тата «Патрак» калавсене питлет. «Шахтĕр» калавра Данилов рабочисен пурнăçне пĕлни пĕртте курăнмасть. Илемлĕх çук, калавăн тематики хăйне кура пулсан та илемлĕх енчен çара шăмă-шакă çеç».

Ухсай Яккăвне литературăри куçару ыйтăвĕ те хумхантарнă. «Пĕр кĕнеке çинчен пĕр-ик сăмах» (1930) статьяра «Тутарсен хальхи литературинчен» Н.И. Шелепи куçарăвĕ пирки сăмах пырать. Хати Такташăн «Ӳкĕнĕçлĕ юрату» поэмине начар куçарнă тесе хаклать. Çав вăхăтрах ăна мĕнле куçармаллине те кăтартать. Шелепи çапла куçарнă:

Юрату
Питĕ кивĕ япала.
Анчах пур çамрăкра та
Çĕнелет вăл япала.

Чĕрене вут пек çунтарать.
Çамрăк уншăн чунне парать.

Ухсай Яккăвĕ çапла куçармалла пулнă тет:

Юрату
Вăл кив япала
Анчах
Кашни чĕре ăна çĕнетет.
Ухмах çамрăклăх çур ĕмĕрне
Ун çулăмпа çунма парать».*

Публицист чăваш литература классикне К.В. Иванов пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне нумай статья халаллană: «К.В. Иванов» (1935), «К. Ивановăн пичетленмен произведенийĕсем» (1935), «Лермонтов тата Иванов» (1939), «К.В. Иванов. Некрасова куçарни çинчен» (1940), «К.Иванов пурнăçĕ» (1940), «К.В. Иванов ал çырăвĕсем пирки» (1940), «К.В. Иванов тата А.В. Кольцов» (1940).

«Лермонтов тата Иванов» статьяна илер-ха. Кунта чăваш литература классикĕ К.Иванов Лермонтовăн «Чуп ту», «Парус», «Пурнăç курки», «Хумсемпе çынсем», «Пирĕшти» сăввисене куçарни çинчен çырать. Ман шутпа, ку статья паянхи куншăн та кирлĕ, мĕншĕн тесен Ухсай Яккăвĕ куçару ĕçĕн кăткăслăхне уçса парать: «Пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарасси почта ямшăкĕ пек пĕр ялтан теприне каясси мар. Куçараканăн сăмахсемпе куплетсене пăлтăр-палтăр çавăркаласа каймалла мар, произведенин формипе ăшчикне пăсмасăр тата художествăлла элеменĕсене çухатмасăр куçармалла».

Çак статьярах Ухсай Яккăвĕ танлаштарусемпе усă курать. Константин Иванова Мичуринпа танлаштарать: «Чаплă пахчаçă Мичурин тĕрлĕрен пан улмине суйласа илсе вĕсенчен чипер пан улми туса ӳстернĕ. 17 çулхи Константин Иванов та яка чĕлхе тăвас тĕлĕшпе Мичурин тивĕçлĕхне йышăннă, халăх чĕлхинчен чи лайăх тĕпренчĕкĕсене пухса кристалла таса литература чĕлхине тăвас ĕçе пуçласа янă».*

Тĕрлĕ ыйтупа çырнисене хăйсене темиçе пĕчĕк ушкăна пайлама пулать: çĕнĕ пурнăçа çутатса параканнисем, ĕç паттăрĕсем, Хĕрлĕ çар салтакĕ, ача-пăча теми, çамрăксен теми, халăхсен туслăхĕ.

Çĕнĕ пурнăçа сăнласа паракан статьясен шутне çаксене кĕртрĕмĕр: «Ĕç паттăрĕ А.Т. Калинина», «Леонтий Остряков», «Анна Михайлова», «Тимофей Ахазов» очерксемпе статьясене асăнмалла.

Хĕрлĕ çар салтак темине публицист «Ворошилов субботникĕ» ятлă очеркра уçса панă.

Ухсай Яккăвĕ пионерсене, ача-пăчана юратнине палăртмалла. Çакна эпир «Пионерсем патĕнче – хăнара» статьяра куратпăр.

Çамрăксен темине «Тăвай çамрăкĕсем», «Иванăн ĕмĕчĕ таврăнни» статйисенче çутатса панă.

Халăхсен туслăхне «Чăваш коммунинче» (1938) июлĕн 16-мĕшĕнче пичетленнĕ «Халăхсен туслăхĕ» ятлă пысăк статьяна халаллană.

Эпир хамăр наука ĕçĕнче Ухсай Яккăвĕн пултарулăхĕнчи пуçламăш тапхăрне тĕпчерĕмĕр. Чăваш халăх поэчĕ 30-мĕш çулсенче ытларах публицистикăлла произведенисем çырнă. Эпир пĕтĕмпе 50 яхăн хайлавпа паллашрăмăр. Ку вăхăтра поэт ăçта, хăçан, мĕн пичетленĕ? Мĕнле хаçат-журналпа çыхăну тытнă? Хăйĕн статйисене публицист Мускавра тухса тăракан «Чăваш хресченĕ», «Коммунар» ятлă чăваш хаçачĕсенче, «Литература хаçатĕнче», «Канаш», «Чăваш коммуни», «Красная Чувашия» хаçатсенче, «Сунтал». «Илемлĕ литература», «Хатĕр пул», «Трактор», «Колхозник» ятлă журналсемпе альманахсенче пичетленĕ.

30-мĕш çулсенчи публицистикăн тĕп темисем – чăваш халăхĕн ĕçри паттăрлăхĕ, коллективлă хуçалăхсем йĕркелени, малта пыракансен ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсен ĕçри паттăрлăхĕ, тăван халăхăн культури, литература критики.

Ухсай Яккăвĕн ку вăхăтри произведенисен жанрĕ те тĕрлĕрен: литература ыйтăвĕпе çыхăннă статьясемпе рецензисем, критикăлла заметка, очерксемпе фельетонсем.

Ухсай Яккăвĕн 30-мĕш çулсенчи публицистики паян кун та хăйĕн хакне çухатман. Ăна Иван Яковлевич Тенюшев та çирĕплетнĕ: «Даже публицистические произведения тридцатых годов – начального периода творческой деятельности Ухсая – не потеряли своей ценности: они являются как бы живыми документами прошлого и дают полнокровное ощущение тех далёких лет, когда в деревнях боролись кулачьем, народ с энтузиазмом трудился на первых индустриальных стройках. Вместе с тем публицистика Ухсая способствует успешному решению важных проблем сегодняшнего дня, искоренению недостатков нашей работы, активизации народных масс в хазяйственном и культурном строительстве».